Гарей Ю. К.В. Иванов патĕнче : [сăвă] / Юсуф Гарей; пушкăртларан Г. Ефимов куçарнă // Ялав. – 1971. - № 8. – С. 11.

## Юсуф ГАРЕЙ

### К. В. ИВАНОВ ПАТĔНЧЕ

Эпир ялан çула тухмашкăн хатĕр,
Сунарçă ăмăрткайăкĕсем пек.
Ак Слакпуçне пуçтарăнтăмăр халь те
Мухтавлă Кĕçтенттин йыхăрнипе.

Пире вăл хăй çуралнă кунне чĕнчĕ.
Тĕл пултăмăр пĕлмен туссемпеле.
Поэтăн чăпĕпе черемĕр хĕрчĕ,
Ун ячĕ урлă туслах вай илет.

Мĕн чул поэзи çĕр айне хупланнă!
Çут çамраклăх пытаранă кунта.
Çавăнпала çынсем килсе капланнă:
— Аван-и! — теççĕ аслă поэта.

Çÿрерĕмĕр эпир курса ял тăрăх:
Поэт çÿренĕ çак урамсемпе.
Силпийĕн шывĕ калама çук тăра:
Выртса ĕçетпер халь Кеçтенттин пек.

Черрен курса эпир ăна чыс турăмăр,
Пашархакса калаçрăмăр пышра.
Çулсем иртсен те, ăна çывăх куртăмăр,
Йал-йал пахса тăрать пек вăл умра.

Уçланкă. Кунта савăç çырла пухнă.
Поэт ятне çĕклерĕмĕр курка.
Варман кашларĕ сăвăç килсе тухнăн,
Апла кĕрекере вăл, курăр-ха!

Шап-шурă хурăнсем пуçларĕç юрă,
Пилешĕсем каларĕç такмакне.
Юлташĕсем ташша тухаççĕ, курăр,
Туйса поэт çĕрпывĕн кĕввине.

...Кунта инçетрисем, çывăхрисем
Пуçтарăннă поэтăн музейне.
Параççĕ ал Иванова вĕсем —
Чăваш поэзин Алтăр çăлтăрне.

*Г. ЕФИМОВ куçарнă.*